# ЧӐВАШ РЕСПУБЛИКИН
# САККУНӖ

## ЧӐВАШ РЕСПУБЛИКИН "ЧӐВАШ РЕСПУБЛИКИН ПАТШАЛӐХ КАНАШӖН ДЕПУТАЧӖН СТАТУСӖ ҪИНЧЕН" САККУННЕ УЛШӐНУСЕМ КӖРТЕССИ ҪИНЧЕН

*Чӑваш Республикин Патшалӑх Канашӗ*
*2024 ҫулхи чӳк уйӑхӗн 29-мӗшӗнче*
*йышӑннӑ*

**1 статья**

Чӑваш Республикин "Чӑваш Республикин Патшалӑх Канашӗн депутачӗн статусӗ ҫинчен" 2012 ҫулхи пуш уйӑхӗн 27-мӗшӗнчи 19 №-лӗ саккунне (Чӑваш Республикин Патшалӑх Канашӗн ведомоҫӗсем, 2012, 94 №; Чӑваш Республикин Саккунӗсен пуххи, 2013, 3, 7 №-сем; 2014, 11 №; 2015, 5, 10 №-сем; 2016, 2, 10 №-сем; 2017, 3, 7, 9 №-сем; "Республика" хаҫат, 2018, раштав уйӑхӗн 26-мӗшӗ; 2019, нарӑс уйӑхӗн 15-мӗшӗ, ҫӗртме уйӑхӗн 5-мӗшӗ; 2020, юпа уйӑхӗн 28-мӗшӗ; 2021, раштав уйӑхӗн 8-мӗшӗ; 2022, ҫу уйӑхӗн 5-мӗшӗ, раштав уйӑхӗн 22-мӗшӗ; 2023, пуш уйӑхӗн 29-мӗшӗ, ҫу уйӑхӗн 31-мӗшӗ; 2024, ҫу уйӑхӗн 3-мӗшӗ, ҫӗртме уйӑхӗн 27-мӗшӗ) ҫакӑн пек улшӑнусем кӗртес:

1) 15 статьян 2-мӗш пайӗн 1-мӗш пунктӗнче "Чӑваш Республикин ӗҫ тӑвакан власть органӗсен" сӑмахсене "Чӑваш Республикин ӗҫ тӑвакан органӗсен" сӑмахсемпе улӑштарас;

2) 16 статьян 1-мӗш пайӗнче "Чӑваш Республикин ӗҫ тӑвакан власть органӗсен" сӑмахсене "Чӑваш Республикин ӗҫ тӑвакан органӗсен" сӑмахсемпе улӑштарас;

3) 17 статьяра:

а) 3-мĕш пайра "Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн органĕсене" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕсене" сăмахсемпе улăштарас;

ă) 4-мĕш пайра "Чăваш Республикин ĕç тăвакан власть органĕсем" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕсем" сăмахсемпе улăштарас;

4) 21 статьян 1-мĕш пайĕнче "10000" цифрăсене "15000" цифрăсемпе улăштарас.

**2 статья**

1. Çак Саккун, çак Саккунăн 1 статйин 4-мĕш пункчĕсĕр пуçне, ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кунран пуçласа вăя кĕрет.

2. Çак Саккунăн 1 статйин 4-мĕш пункчĕ 2025 çулхи кăрлач уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа вăя кĕрет.

Чăваш Республикин
Пуçлăхĕ – О. Николаев

Шупашкар хули
2024 çулхи раштав уйăхĕн 3-мĕшĕ
91 №